С(Чув)
Д 13
17070-чув
5



## ТĂВАНСЕМĔР, ТАВ СИРЕ

# Василий Давыдов-Анатри

Национальная библиотека ЧР
4-017070

**ВОЗВРАТИТЕ**
обозначенн

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |

С (чув)
Д 13

ВАСИЛИЙ ДАВЫДОВ-АНАТРИ

# ТӐВАНСЕМӖР, ТАВ СИРЕ

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. № 5380

ЧӐВАШ КӖНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар—1973

С (Чув)2
Д 13



М 17070-чхв.

Национальн... ...а
Чувашской
Республики

ПРОВЕРЕНО
2010

7—4—3
60—73 м

# ПУРНĂÇ ĂШШИ

## РАÇÇЕЙ

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухаççĕ шурă хурăнсем.
Ăшшăн лăпкаççĕ чĕрене
Сергей Есенин сăввисем.

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухаççĕ Атăл хумĕсем.
Вĕçе-вĕçе вĕсем çине
Анса лараççĕ акăшсем.

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухаççĕ паттăр салтаксем.
Тăван çĕршыв вутра чухне
Пуç хунă хаклă тантăшсем.

Раççей тесессĕн, куç умне
Тухать тăван атте-анне.
Куратăн Ленин сăнарне,
Мĕнпур этемлĕх хĕвелне.

1967.

## ХЁВЕЛ

Сăнанă-и ирхине:
Хĕвел хĕлхем сапнине,
Çўрен лаша çилхине
Çутă ылтăн тĕслине.

Сăнанă-и ирхине:
Кĕмĕл сывлăм ўкнине,
Ирхи хĕвел шевлине
Чĕкеç чĕппи ĕçнине.

Сăнанă-и ирхине:
Хĕвел ташша янине,
Сарă тулă пуссине
Ыталаса илнине.

Сăнанă-и ирхине:
Эпир çунат сарнине.
Çĕре, этем тĕнчине
Хĕвел тытса тăнине.

1971.

## КУНТА, ЧĂВАШ ÇĚРШЫВĚНЧЕ

Саватăп эпĕ ирхине
Садри саркайăк юррине.
Тĕнче мĕнле чипер, хитре,
Çĕклет ыр туйăм чĕрене.

Васкатăп эпĕ уй-хире.
Çĕр ăстисем пурте — ĕçре.
Акаççĕ сĕлĕ, хуратул,—
Çĕршывăм, вăйлă, пуян пул!

Тухатăп эпĕ урама
Ĕçрен килсен,
кăштах канма.
Юрлаççĕ шурă хурăнсем,
Ташлаççĕ çамрăк çăкасем.
Сиксе юхаççĕ çырмасем,
Тапса тăраççĕ çăлкуçсем.

Кунта, Чăваш çĕршывĕнче,
Мăнаçлă Атăл хĕрринче.

1963.

## ЧĔРЕ

Эсĕ маншăн тĕнче
Çĕр-планета çинче,
Пурнăçра чи хакли,
Чи кирли, хăватли.
Тап, ан сӳн эс, чĕре,
Тăс куна, ĕмĕре.

Эсĕ маншăн тĕнче,
Пĕр танах хĕвелпе,
Хаяр хĕл кунĕнче
Кĕрешен сивĕпе.
Тап, ан сӳн эс, чĕре,
Тăс куна, ĕмĕре.

Эсĕ маншăн тĕнче,
Упран чун хĕлхемне,
Кăкăрăм çумĕнче
Усран пурнăç çулне.
Тап, ан сӳн эс, чĕре,
Тăс куна, ĕмĕре!

1971.

## ШУПАШКАРӐМ, ТӐВАН ШУПАШКАР

Шупашкарӑм, тӑван Шупашкар,
Чунтанах юрататӑп сана.
Куллен кун эс ҫӗклен, ҫунат сар,
Сӑнупа илем кӳр таврана.

Шупашкарӑм, тӑван Шупашкар,
Кӗтсе ил, ан хӑвар кӑмӑла:
Йӗр хывмасӑр тӑрса юлас мар,—
Пӗвелетпӗр пулсан Атӑла!

Шупашкарӑм, тӑван Шупашкар,
Ан хавшат улӑпла утӑмна.
Ӗмӗрех пул чипер, пул хастар,
Ҫулсерен эс ӳстер ху чысна.

1968.

## МАНА ХАТĔР ПУЛĂШМА

Вырăспала вырăсла,
Тутарпала тутарла
Пултаратăп калаçма.
Яр уçатăп чунăма.
Чĕлхем пăртак такăнсан,
Кăштах картне лармасан,
Мана хатĕр пулăшма,
Мана хатĕр ал пама
Вырăс тусăм вырăсла,
Тутар тусăм тутарла.

1966.

## ÇĔНĔ ÇУЛĂМ, ÇĔНĔ ÇУЛ

Çĕнĕ çулăм, çĕнĕ çул,
Ут хăюллăн, паттăр пул.
Сума су эс ĕçчене,
Тулăх пурнăç хуçине,
Кахалсене ан хĕрхен,
Шăлса тасат çĕр çинчен.

Çĕнĕ çулăм, çĕнĕ çул,
Ут хăюллăн, хастар пул.
Ача-пăча савнăçне
Ан пар нихçан, ĕмĕрне
Çичĕ ютăн аллине.

Çĕнĕ çулăм, çĕнĕ çул,
Ут хăюллăн, çирĕп пул.
Туслăха эс хуралла,
Вăйлă, харсăр улăпла,—
Аван тату пурăнни,
Пĕрне-пĕри юратни.

Çĕнĕ çулăм, çĕнĕ çул,
Ут хăюллăн, паттăр пул.
Упра совет халăхне,
Упра совет çĕршывне,
Çăлтăр патне, тӳпене,
Çĕкле Ильич ялавне!

1966.

## ВАШИНГТОН, ЭС ИТЛЕ!

Вашингтон, эс итле.
Çĕр-планета питлет
Эс вутпа-кăварпа,
Хĕçпăшал, бомбăпа
Вьетнамра аснине,
Вьетнамра урнине.

Çĕн Вьетнам парăнмасть,
Çĕн Вьетнам пăрăнмасть
Аслă, ирĕк çултан,
Халăхра вăй пуртан
Аркатать çăхана,
Юнĕçен тăшмана.

Çĕн Вьетнам парăнмасть,
Тăшмана çул памасть,
Ун йăли ак çапла:
Кам тискер кашкăрла
Тапăнать çынсене,—
Татмалла сăннине!

Çĕн Вьетнам парăнмасть,
Çĕн Вьетнам шутламасть
Тăшмана пуç тайма,
Чурара пурăнма...
«Вилĕм, тет, вăл вăрçа»,
Саламлать пурнăçа!

1967.

Хĕрарăм тухнă урама,
Хăй ачине хистет утма.
Ачи аран-аран пусать,
Çавах пӳне хăй хытарать.

Унтан айри çĕре туйса,
Хăй амăш аллинчен тытса
Шутлать утмашкăн малалла,
Шутлать вĕçмешкĕн кайăкла.

1965.

## ÇУЛ ÇИНЧЕ

### *Ача чухнехи*

Çакнă çурăм хыçне кутамкка.
Эп утатăп, ура ыратать.
Куç умне ак тухать Сартумка,
Чипер ял, çĕнелни курăнать.

Ял-ял витĕр малтан малалла
Чĕмпĕр çулĕ выртать тăсăлса.
Чун çунать, тен, сисет пулмалла:
Ушкăн пĕлĕт килет хуралса.

Çумăр çурĕ. Сывлатăп туллин.
Хĕвел кулчĕ, пуçлать ташшине.
Акă Чĕмпĕр — Ульяновск хули
Алă пачĕ чăваш ачине.

1971.

## ТУЙНĂ ПУРНĂÇ ĂШШИНЕ

Эп пĕчĕк чух, утиччен,
Калаçма вĕрениччен,
Анне кĕпи аркинчен
Мĕн чул тытман ўкесрен.
Тăван анне çумĕнче,
Ун пир кĕпи аркинче
Туйнă тĕрек пуррине,
Туйнă пурнăç ăшшине.

1967.

## САН ÇУМĂНТА ТУСУСЕМ

Тусусем сан çумăнта,
Кĕрхи сивĕ çумăрта
Вĕсем çинчен шухăшла,
Хыв тумтирне, хупăрла.

Çырма урлă, ăнсăртран,
Каçма кĕпер çук пулсан,
Ху тăр кимĕ вырăнне,
Каçма пулăш леш енне.

Вăрăм çулта ывăнсан,
Утма вăй-хал юлмасан,
Тусусене алă пар,
Пуçна ан ус, ут патвар!

1971.

## АТТЕ СĔТЕЛĔ ХУШШИНЧЕ

Ҫыратăп эпĕ каҫсерен
Атте сĕтелĕ хушшинче.
Чĕрем кĕтни килмессерен
Пур пек телейĕм ҫĕр ҫинче.

Ҫапла, чĕре вучахĕнчен
Ҫунатлă сăвă тухиччен,
Поэт ыйха татса ĕҫлет,
Ҫĕршывăма парне пиллет.

1967.

## ЯЛТА ТАВАР СУТАКАН

Ăçтан хăват çитет ăна,
Ялта тавар сутакана,
Пĕри пырать,
ыйтать тăвар,
Тепри кĕрет —
Шур çăнăх пар...

Хут-кăранташ — ачасене.
«Çутти» те кирлĕ хăшпĕрне...
Мĕн-мĕн ыйтмаççĕ-ши унтан,
Ялта тавар сутакантан.

Ура çинче яра куна
Тăма тивет ĕçчен çынна,
Вăл савăнать — тавар кайсан,
Чĕри çунать — ĕç ăнмасан.
Ватти-вĕтти паллать ăна,
Ялта тавар сутакана.

1967.

## СĂМАХ ХĂВАЧĔ

Сăмах хăватлă иккенне
Эп сиснĕ, пĕлнĕ пĕчĕкрен.
Унпа вĕçетĕн тӳпене
Тăван анне чĕрçи çинчен.
Сăмах хăватлă иккенне
Эп шаннă, туйнă ĕлĕкрен.
Унпа ĕшеннĕ çын чунне
Хăват паран, çĕклентерен.
Сăмах хăватлă иккенне
Эп туйнă йывăр кунсенче:
Унпа тăшман вăйне-халне
Аркатнă вăрçă хирĕнче.

1967.

М 17070-ЧХВ.
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
БИБЛИОТЕКА Союза писателей Чуваш. АССР Инв. № 5380

## ЧĂВАШ УНИВЕРСИТЕТНЕ

Чăваш çынни çунат илсе,
Çӳл тӳпене çĕкленессе
Сахал-и кĕтнĕ чĕререн
Мĕн авалтан, мĕн ĕлĕкрен.

Ĕмĕр кĕтни килтен киле
Çӳрет. Иртетпĕр тĕпеле!
Кунтах çĕн университет —
Октябрь панă чăн тивлет.

Ларать вăл Атăл хĕрринче,
Раççей-аннемĕр хӳттинче.
Яри уçса алăксене
Чунтан кĕтет ачисене.

Тавах, çĕршывăм,
эс пире
Ялан усран чыс-хисепре.
Мухтав сан хаклă парнӳне —
Чăваш УНИВЕРСИТЕТНЕ!

1967.

## ЕТĔРНЕРЕ

Писательсем — Етĕрнене,
Тăван çырулăх эрнине!
Çак çĕн хыпар вĕçсе çитсен,
Тус-пĕлĕшсем пур ялсенчен
Тухма васкарĕç Сăр хĕрне
Кĕтме пире, хăнасене.
Пур вырăссем, пур чăвашсем,
Чăн авалхи хурăнташсем.
Маттур иккен етĕрнесем,
Ĕçчен сынсем, çĕр ăстисем.
Кунта Ашмарин ачисем,
Кунта Мордвинов шăллĕсем,
Кунта Агаков тусĕсем,
Кăвар чĕреллĕ этемсем
Упраççĕ пурнăç илемне.
Мĕнле эс савмăн вĕсене!
Çĕршыв чĕнсен, етĕрнесем,
Хветут Орлов янташĕсем,
Вăрçа çĕкленнĕ улăпла,
Пĕрле, мĕнпур халăхпала...
Мĕн ыррине чĕре сисет,
Лукин поэт сăмах илет.
Тăван чĕлхемĕр çĕнĕлле,
Çиççе вылять вут-çиçĕмле,
Шăнкăртатса юхать хитрен,
Хурçа татать хĕрсе çитсен.
Тухса тăрать, чипер хĕр пек,
Патвар чăваш Мĕтри Кибек.
Вăл килнĕ хаклă парнепе,
Ик хул хушши кĕнекепе.
Çул çӳреме мĕнле аван,
Санпа пĕрле чухне, Аслан.
Юлташăм, эсĕ пултаран:
Юмах яратăн, култаран.
Воробьева çитет черет,
Вăл тĕпеле, мала иртет.

Ватти-вётти ăна итлет,—
Поэт «Ку маншăн парне», тет.
Вулать ак Галкин çёкленсе,—
Кирлех иккен юптарусем!
Ян-ян каяççё кёрлесе
Орлов, Ефимов сăввисем!
Хальхи чипер Етёрнере
Хёл чаршавне сире-сире
Юхать ман сасă инçене,
Çёклет ялти ёçченсене.
Тавах сире, етёрнесем,
Пур пёлёшсем, тăванăмсем.
Пёрле ирттернё кунсене
Эпир манмастпăр ёмёрне.

1967.

## АВАН-И...

Лайăххи часах пулмасть,
Васканипе кĕмест алла.
Пиртен начар, тесе кулма
Юрать-ши, тусăмсем, апла.
Çын чĕрине,
                    чунне кĕме
Туятпăр: çăмăл мар иккен.
Анчах та япăх ку теме
Вĕреннĕ хăшĕ ĕлĕкрен...
Тытса чарасчĕ вĕсене —
Усал, хаяр чĕлхесене!

1967.

## ХĂНАРА

Кунтан аван мĕнле пулать,—
Пире чыслатăр хăнара.
Çаплах кĕрлет каçхи хула
Кĕрхи тату тăванлăхра.

Пĕр-пĕринпе эпир çапла
Пур кăмăлтан юлташ, тăван.
Сăра курки тытса алла
Çынна мухтатпăр чун-вартан.

1967.

## МАН ШӐПА

Мӗскер кӑна тӳсмен, курман
Раççей çӗршывӗ авалтан.
Ӑна пулать-ши шутлама,
Сӑмах çитет-ши калама.
Тӑван çӗршывӑм, тав сана,—
Кӑтартрӑн эсӗ ху вӑйна,
Аркатрӑн ирсӗр тӑшмана,
Пиллерӗн улӑп-халӑхна
Илемлӗ, çӗнӗ самана.
Пур ман пӗр шухӑш пуçӑмра,
Ӑна тытатӑп асӑмра:
Чӗрем, кунçулӑм халӑхпа,
Çӗршыв шӑпи вӑл —
                    ман шӑпа!

1963.

## ЧĂВАШ ВĂРМАНĔ

Ыр тунине камах-ши манĕ?—
Ăна саватпăр чĕререн.
Хуллен шавлать чăваш вăрманĕ,
Куҫа илместпĕр ун ҫинчен.

Ҫулла пулсан, ҫырла татмашкăн
Сахал ҫӳренĕ-и унта?
Вăрман парать пире вут-шанкă,
Унпа кĕретпĕр ҫĕн ҫурта...

1965.

## ХĂМЛА

Чăваш хăмла хăвачĕпе
Чап илчĕ аслă Раççейре.
Çӳрет вăл ылтăн шучĕпе,
Кӳрет илем кĕрекере.

Эпир ĕçре кайра пыман,
Ялйыш ятне, чысне яман.
Çуллен хăмла тăва-тăва
Чăваш халь тухрĕ мухтава!

1967.

## ЯЛАН КУРАСЧЁ ВЁСЕНЕ

Курсах каймастпăр хăш чухне
Ĕçчен, сăпайлă çынсене.
Килет пуласлăх вĕсенчен —
Хĕрӳ, вĕри чĕресенчен.

Вĕсем хăйсен чун ăшшине,
Çунатлă ăсăн илемне
Пиллеççĕ çĕнĕ ĕмĕре,
Тăван çĕршыв-аннемĕре.

Ялан курасчĕ вĕсене —
Ĕçчен, сăпайлă çынсене.
Пуласчĕ манăн ĕмĕрех
Çав çынсемпе пĕр ĕретрех!

1966.

## ЧӖРЕМ ТАПМА ПӐРАХСАН...

Чӗрем тапма пӑрахсан,
Мана пӑртак юратсан,
Туссем, пырӑр ӑсатма,
Савса юрлӑр юррӑма.
Аса илӗр ун чухне
Эпӗ ҫыншӑн ҫуннине.
Манӑн мӗнпур ӗҫӗме,
Чун-чӗрери хӗлхеме
Сӳнми парне парне выранне
Пиллӗр Ҫӗршыв-аннене.

1967.

## МИР КИРЛĔ

Хĕвелĕм, эсĕ манпала
Утатăн аллă çул ытла.
Пăхса илсемччĕ каялла,—
Хыçра выртса юлан çула.
Пире çав çул ансат пулман:
Эпир унта мĕн-мĕн курман,—
Шар турĕ вăрçă халăха,
Çĕршывăм чăтрĕ выçлăха.
Мĕн чул чи çывăх юлташсем,
Тăвансемпе тус-тантăшсем
Юлмарĕç сывă çĕр çинче,
Пуç хучĕç вăрçă хирĕнче.
Хаяр вăрçа аса илсен,
Халь те каймасть куç умĕнчен
Çĕршыв çунни, этем вилни,
Ача куççуль тăкса йĕни...
Хĕвелĕм, эсĕ манпала
Утатăн аллă çул ытла.
Тус-тăвансемĕр чĕннипе,
Ача-пăчамăр ячĕпе
Калар-ха çирĕп сăмаха:
Мир кирлĕ пĕтĕм халăха!

1965.

## КАҪАР, АННЕ

Каҫар, анне, час-час ҫырмарăм,
Ан кӳренсем, ан ӳпкеле.
Сан умăнта сахал-и парăм,
Хăҫан татса пĕтермелле!

Каҫар, анне, чунри ҫунатăм,
Сисетĕп эп, тек ан пытар,—
Ҫыру ҫук чух хыпса ҫунатăн,
Пăшăрханса кĕтен хыпар.

Аннеҫĕм, эс мана ăсатрăн
Инҫе ҫула, ҫĕн хулана.
Ху ачуна асран ямарăн,
Эп этем мар мансан сана!

1961.

## ТĂВАН АТĂЛ

«Атăл, Атăл, çĕршывăн илемĕ!»
Çапла тенĕ Митта сăввинче.
Ăна халь ытама эп илем-и,
Эп сикем-и ун хумĕ çинче.

Аслă Атăл, çаплах ывăнмастăн,
Ыткăнатăн ялан малалла,
Пуç усмастăн,
нихçан ватăлмастăн,—
Мĕн чул ырлăх пире санпала!

Савнă Атăл, парсам эс çунатлăх
Ху çĕкленĕ хумсен пĕр пайне:
Çунса тăтăр чĕремĕр хăватлăн,
Ан сӳнтертĕр хĕрӳ хĕлхемне.

Тăван Атăл, Раççей чыс-мухтавĕ,
Эс пиллетĕн вăй-хал ĕмĕре.
Санра пирĕн çĕн кун, пурнăç шавĕ,—
Çĕр-планета çинче эс пĕрре!

1967.

## ЭКСПРОМТ

Çынпа çын паллашать,
Çынпа çын туслашать...
Ку аван япала
Ĕмĕре пымалла.

Çынпа çын ятлаçать,
Çынпа çын çапăçать...
Ку начар япала
Йăлт пĕтсе пымалла.

1965.

## ЭПИР, ÇĔН ЁМĔР КАЧЧИСЕМ

Сим-пыллă туслăх куркине
Йăтар-и, хаклă тантăшсем.
Çула тухатпăр ирхине
Эпир, çĕн ĕмĕр каччисем.

Совет салтакĕн тивĕçне
Хурас чĕремĕр варрине:
Тăшман ан пăстăр ĕмĕрне
Çĕршыв-аннемĕр чиккине.

Çырсамăр ăшă саламсем
Эсир, маттур чипер хĕрсем.
Манмастпăр эпĕр чикĕре,
Чун çумĕнчи туссем, сире.

Атте-аннемĕр пиллĕхне
Ялан асра тытса çӳрес.
Вĕсен мухтавлă ыр ятне
Савса упрас, çӳле çĕклес.

1967.

## СĂМАХ КИРЛЕХ-ШИ...

Сăмах кирлех-ши кун çинчен,—
Çынсем пулаççĕ тĕрлĕрен.
Паллаш çеç эсĕ хăшинпе,
Ут çеç эс унăн йĕрĕпе,
Туятăн пурнăç ăшшине,
Куратăн пурнăç илемне.
Кашни этем, хăйне кура,
Лайăххине часрах курать,—
Каяс килет хăшпĕр çынпа
Малтан мала умри çулпа.

Сăмах кирлех-ши кун çинчен,—
Çынсем пулаççĕ тĕрлĕрен.
Паллаш çеç эсĕ хăшинпе,
Кĕтмен çĕртен тĕл пул ĕçпе,—
Сана тем хĕснĕн туйăнать,
Тĕнче те тăвăр курăнать.
Кашни этем, хăйне кура,
Начаррине хăвăрт курать,—
Тарас килет хăшпĕр çынран,
Хăратăн йывăр пуласран.

Сăмах кирлех-ши кун çинчен,—
Çынсем пулаççĕ тĕрлĕрен.
Курасчĕ пирĕн вĕсене
Çурхи хĕвел пек пулнине.
Этем тени хăй чунĕпе,
Сÿнми илемлĕ сăнĕпе,
Хĕрÿ, мухтавлă ĕçĕпе
Мăшăр çунатлă ăсĕпе
Çутаттăр пĕтĕм çынсене,
Хал патăр пĕтĕм тĕнчене!

1965.

## ПАТĂРЪЕЛСЕМ

Мĕскер ĕнтĕ калар-ши сире,
Тĕлĕнетпĕр тухсан уй-хире.
Эсир пурте ĕҫлетĕр хĕрсе,
Юхмаен Патăрьел хĕрĕсем,
Пăлаҫи Патăрьел каччисем.

Кам-ха савмĕ, юратмĕ сире:
Сăн-пуҫран питĕ хӳхĕм, хитре.
Эсир мар-и тырпул ăстисем,
Юхмаен Патăрьел хĕрĕсем.
Пăлаҫи Патăрьел каччисем.

Мухтанатпăр эпир сирĕнпе,
Ҫĕрпе туслă, ĕҫчен ҫынсемпе,
Эсир мар-и кăвар чĕресем,
Юхмаен Патăрьел хĕрĕсем.
Пăлаҫи Патăрьел каччисем.

1967.

## КУККУК

Çут тĕнче илемлĕ,
Садсем чечекре,
Йăлтах çĕр çĕнелнĕ
Тăван кĕтесре.
Туссемпе çӳретĕп
Вăрман хĕрринче.
Куккук сасă пачĕ
Çăка тăрринче.
Суха сухалаççĕ
Хирте тракторсем.
Шăрăх. Вăй-выляççĕ
Хĕвел шевлисем.
Кунтах çут çăлкуçĕ,
Выртап шыв ĕçме.
Куккукĕ хушать ав
Çĕр çула çитме!

1967.

## АН ТАТĂЛ, ПУРНĂҪ...

Умра мĕн чул туман ĕҫсем,
Мана кĕтеҫҫĕ халь вĕсем!

Ан татăл, пурнăҫ, ҫурмаран —
Туятăп, намăс халăхран:
Хам уҫнă йĕрĕм юлмасан,
Хам ҫутнă ҫăлтăр ҫунмасан.

1967.

## ЫВĂЛАМА

Шурăмпуç килет хитрен çуталса,
Ачам, эс каян пиртен уйрăлса.
Килен ирпеле килтен кайиччен,
Çуралнă çĕртен çула тухиччен,
Итлесем мана, тăван аçуна,
Чунри сăмаха каласшăн сана:
Тусна, юлташна курсан ÿкнине,
Тăрат эс ăна, кăтарт çул-йĕрне.
Йывăр кун килсен, ан тăр пуç усса,
Хăравçă пулса ан тар пăрахса.
Усал шухăшпа çÿрекен çынна
Алăкна уçса ан кĕрт ху патна,
Пире халăхпа аван пурăнма,
Çынсен туслăхне ан ман упрама.
Шыва путакан тăссан аллине,
Çит эс пулăшма вĕçсе ун патне.
Ачам, ан туслаш усал-тĕселпе,
Çиме пултаран пуçна вĕсемпе.
Юлташ-тусусем пит нумай пулсан,
Тĕнчере те çук пуянни санран.
Çынсене ялан хисепле, хакла,
Чунтан-чĕререн юрат тăванла.
Çын парне парсан, сахал ку, тесе,
Ун чысне-хакне питех йÿнетсе,
Ан тат, ан хăвар этем кăмăлне,
Ăшшăн тав туса çĕкле ун чунне.
Çунатна сарсан, ÿссе çын пулсан,
Аçу-аннÿне, ялйышна ан ман.
«Кам эпĕ?» тесе пуçна каçăртса,
Тăван халăхна, кил-çуртна манса,
Ан çÿре, ачам, тĕнче кастарса,
Ан çÿре, ачам, çынна култарса.
Ĕçсе-ашкăнса, ятна варласа,
Çынлăхран тухса, пуçна çухатса,
Ан çÿре, ачам, нихçан-ĕмĕрне,
Ан йĕрт, ан çунтар аçу-аннÿне.

Хура пӗлӗтсем тухни курӑнсан,
Ҫӗршыв-аннене тӑшман тапӑнсан,
Тух эс ҫапӑҫма ҫиллӳне пухса,
Тух эс аллуна хӗҫпӑшал тытса...
Яланах пӗрле Тӑван ҫӗршывпа,
Яланах пӗрле тӑван халӑхпа
Ильич кӑтартса пыран ҫулпала,
Утсам эс, ачам, малтан малалла!

1969.

## ÇĔНĔ ПӰРТ ПАРНИ

Эсир пире юратса,
Кăмăл туса, ыр сунса,
Чĕнтĕр тулăх кĕркунне
Çĕнĕ пӳртĕн ĕçкине.
Тăвансемпе, туссемпе,
Маттур, ĕçчен çынсемпе,
Лартрăр сĕтел хушшине,
Патăр сим-пыл куркине.
Сим-пыл хаяр, сисиччен,
Сăхса илчĕ пуçсенчен.
Çапах, тăнпуç пур чухне,
Пуçлар çĕн пӳрт саламне.
Кĕрекĕрсем çулсерен
Тĕрлĕ ĕçме-çимĕçрен
Пуян пулччăр, пур пулччăр,
Ялан тулли курăнччăр.
Ĕне-пăру, чăх-чĕпсем,
Йăлт-ялт сикеç путексем.
Пахчăр тулли панулми,
Турат йăтса ларайми.
Аван сирĕн ачăрсем,
Хăвăр пекех ĕçченсем...
Çĕнĕ пӳртĕр çĕр çулччен,
Виç сыпăка çитиччен,
Лартăр хăнк та тумасăр,
Ятăрсене ямасăр.
Çакă çап-çут çĕн пӳртре
Çичĕ хутчен эрнере
Ватти юмах юптартăр,
Çамрăксене култартăр.
Хирти ĕçсем вĕçленсен,
Çĕнĕ çулччен, çич хутчен
Тус-йыш сиктĕр, ташлатăр,
Туй пуçлатăр, хĕр патăр.
Ялан ăшă çăкăрпа,
Таса, ырă кăмăлпа

Пире кётсе илессё,
Хапха уçса кёртессе
Чунтан шанса тăратпăр,
Сире пуçа таятпăр.
Çирĕп пулăр сывлăхран,
Хăват илĕр халăхран.
Çитменнине çитерĕр,
Килменнине килтерĕр.

1968.



# ПУРÇĂН ТУТĂР

## ЮРАТУСĂР МĔНЛЕ ПУРĂНАН

Савнă тусăм, санпа тĕл пулсан,
Хуйхă-суйхă иртет, çухалать.
Чун-чĕрем хĕвелле çуталать...
Юратусăр мĕнле пурăнан!

Савнă тусăм, санпа тĕл пулсан,
Сăмах хыççăн сăмах тупăнать,
Вăрăм çул та кĕскен туйăнать...
Юратусăр мĕнле пурăнан!

Савнă тусăм, санпа тĕл пулсан,
Сисĕнмест, вăхăт хăвăрт шăвать.
Васкаса шурăмпуç хăпарать...
Юратусăр мĕнле пурăнан!

1968.

## ÇĔН УЙĂХ ЙĂТРĔ ÇУРЛИНЕ

Çĕн уйăх йăтрĕ çурлине,
Çул тытрĕ тулă пуссине.
Кĕтетĕп эпĕ савнине,
Хам телее, чун уççине.

Çухатрĕ уйăх хăй йĕрне,
Анма васкарĕ кӳл хĕрне,—
Вăл курнă чунăм савнине,
Ман патăма васканине.

1968.

## МАРИНЕ

Ӳкнӗ сывлӑм ҫӗр ҫине,
Сасӑ пачӗ калинке.
Анать кӳлӗ хӗррине
Савнӑ тусӑм, сарпике.

Чун савнине чун кӗтет,—
Илтеп ура сассине.
Сукмакпала хӗр килет,
Тем тесен те — Марине.

Тарай тутри пуҫӗнче
Юратушӑн вӗл-вӗҫет.
Унӑн мӑшӑр куҫӗнче
Ирхи шуҫӑм ирӗлет.

1971.

## ЮРАТУШĂН ЮРĂ ТУПРĂМ

Юратушăн юрă тупрăм,
Юратушăн ăш çунать.
Саншăн, саншăн, савнă тусăм,
Пĕр канăç çук ман чуна.

Юрă пултăн эсĕ маншăн,
Юлчĕ юрă асăмра.
Маттур каччă эпĕ саншăн,
Саншăн чунăм — çулăмра.

Юрă пулнă юратушăн
Эп юрларăм юррăма.
Саншăн уçрăм, савнă тусăм,
Çулăм хыпнă чунăма.

1971.

## ШУР КĂВАКАЛ ВĔÇТЕРТĔМ

Шур кăвакал вĕçтертĕм,
Шур хут çине ӳкертĕм.
Пĕр сар хĕре сăнарăм,
Ăна куçран ямарăм.

Пурçăн тĕрки вĕçтертĕм,
Сар хĕр умне ӳкертĕм,
Ăна куçпа систертĕм,
Чун çуннине пĕлтертĕм.

1946.

## ПУРҪĂН ТУТĂР

Пурҫăн тутăр савни пуҫĕнче,
Ыр сунса эпĕ панă парне.
Вĕл-вĕҫет укăлча ҫумĕнче,
Чĕнет пулĕ мана хăй патне.

Пурҫăн тутăр, сана шыраса
Такăрлатрăм Тури урама.
Кĕтсе ил: шурă лантăш йăтса,
Вĕҫсе ҫитĕп чуна йăпатма.

Пурҫăн тутăр савни пуҫĕнче,—
Ҫĕр пин тĕрĕ, пĕрре кивелмен.
Пур телей, пур илем ҫĕр ҫинче
Чĕрере юрату сӳнмесен.

1969.

## ЮРАТУ ÇĂЛКУÇĔ

Савнă тусăм, ан ман ĕмĕрне,
Эс упра юрату çăлкуçне,
Çиллĕ кун, шăрăхра — типесрен,
Хаяр хĕл сиввинче — сӳнесрен.

Савнă тусăм, ан ман ĕмĕрне,—
Эс сыхла юрату çăлкуçне.
Вăл çĕклет чун-чĕре ăшшине,
Вăл çĕклет чун-чĕре илемне.

1967.

## САТИН КĔПЕ

Килсем эс, тусăм, лар тĕпе,
Сисетĕп: сансăр çул инçе.
Илсем парне, сатин кĕпе,
Чăваш тĕрри çухи çинче.

Тавах пиртен Элкеш хĕрне,
Ăçтан ăсланă тĕррине,—
Куçра вылять мĕльюн чечек,
Тин çеç çĕкленнĕ хĕвел пек.

1969.

## ÇĔПĔРТИ ТУСĂМА

Савнă тусăм, эсĕ çыртăн
Час-час ăшă çырусем,
Тырă акрăн, тырă выртăн...
Ылтăн санăн аллусем.

Вĕçĕ çук-мĕн Çĕпĕр çĕрĕн,
Пуян хăйĕн мулĕпе.
Пайсăр мар эс, чăваш хĕрĕ,
Ыр ят илтĕн ĕçӳпе.

Чун уççиçĕм, пăрчăканăм,
Мухтанатăп санпала.
Ман телейшĕн, мĕнех калăн,
Эс çуралнă пулмалла.

1964.

## САВНИ ВАЛЛИ

Çĕлетрĕм йĕтĕн пирĕнчен
Савни валли хитре кĕпе.
Тĕрри ун пурçăн çиппинчен,—
Пуян эп çакă парнепе.

Ĕçсем пĕтсессĕн, кĕркунне,
Сăмах татма савни килне,
Асаттесен ыр йăлипе,
Кайма илемлĕ парнепе.

Чун савнине юратнине,
Чĕремçĕм уншăн çуннине,
Каласшăн уççăн пĕтĕмпе,—
Каясшăн эпĕ парнепе.

1971.



# КĂНТĂР ХĔВЕЛĔ

## ТИНĔС ШАВЛАТЬ

Ĕнтĕ тинĕс шавлать,
Хум ҫапать,
Тулхăрать, ыткăнать,
Вăркăнать.

Мĕльюн татăк пулса,
Вăй пухса,
Вăшт! каҫать ҫыранран,
Карлăкран.

Мĕскер пулнă ăна?—
Ашкăнать,
Шыв ăсать алтăрпа,
Чаш! сапать.

Ĕнтĕ тинĕс шавлать,
Тулхăрать,
Ыткăнать малалла,
Туртăнать.

1965.

## САЛАМ САНА, ГУРЗУФ!

Çӳрерӗм эпӗ Гурзуфра,
Вăл юлчӗ ӗмӗр асăмра.
Çак вырăнта Упа-Туне,
Вăл тинӗсрен шыв ӗçнине
Сăнарăм эпӗ чылайччен,
Чăр! пăхрăм унăн куçӗнчен.
Çак вырăнта юланутпа,
Сиксе ташлан урхамахпа,
Çӳренӗ Пушкин тусӗпе,
Чăн тăванла, Раевскипе.
Поэт юратнă тинӗсе,
Ăна савса, хисеплесе,
Суйланă хӳхӗм сăмахсем,
Шăратнă сăвă-юрăсем.
Пӗр яштака кипариса,
Поэт чунтан сума суса,
Шутланă тусӗ вырăнне,
Куллен çул тытнă ун патне.
Çӳл кипарис айне тăрса,
Тинӗселле пуçне тайса,
Поэт вуланă сăввине,
Чипер Гурзуфшăн çырнине.
Эп ак поэт сукмакӗпе,
Магноли-персик хушшипе
Анатăп тинӗс хӗррине,
Илтеп Шаляпин сассине.
Кунта вăл, тинӗс кукринче,
Çӳлте, шур чулăн тӳпинче,
Янратнă халăх юррине,
Мухтанă вырăс çӗршывне.
Ак Маяковский çынсене,
Гурзуф енне килнисене,
Чӗнет кӗмешкӗн хăй патне,
Вулать хӗрӳ сăввисене.
Мӗнле илемлӗ, куç тулли
Артек, пионерсен хули!

Эп саврăм туслăх керменне,
Чипер ачалăх ăшшине.
Тăрса итлерĕм-çке юри:
Ян-ян каять «Артек юрри».
Кунта Тольятти, виличчен,
Ачасене чун-чĕререн,
Тус-тăванла хисеплесе,
Хăварнă сывлăх пиллесе...
Кĕрхи хĕвелĕн айĕнче,
Çурт çумĕнчи пукан çинче
Ларать ак Ленин çуталса,
Çĕршыв çинчен шухăшласа.
Эп путрăм шухăша кунта:
Юратнă Ленин кăнтăрта
Пулман, пĕрре канса курман,
Канма вăл вăхăт тупайман...
Гурзуф пулман тăшман хурри,
Кунта янрать çĕн кун юрри.
Салам сана, Гурзуф, салам,
Парсамччĕ ирĕк, ыталам!

1965.

## АЙ-ПЕТРИ

Юрлать хĕрнĕ хĕвел.
Кĕрхи кĕмĕл тенкел,
Кăвак ту айăкки,
Учан-Су шывсикки
Вĕлт иртеççĕ умран,
Çухалаççĕ куçран.
Ав, Ай-Петри тăрри:
Йăлтăрать чул тĕрри.
Эпир ту çулĕпе
Çул çӳрен туссемпе
Вĕçтеретпĕр пĕрле
Хĕвелтухăçнелле.
Таса чулăн туне,
Ун асам тӳпине
Пуç таять çул çӳрен
Пĕтĕм чун-чĕререн.
Çак Ай-Петри çинче,
Шăпах тĕп тӳпинче,
Çĕн тĕнче çыннисен,
Партизан тăвансен
Вилтăпри упранать.
Халь Ай-Петри ăна
Çĕр-анне ячĕпе,
Çĕклет хăй аллипе.
Чул хӳме çакăнта.
Тухнă пурнăç кунта
Вилĕмпе çапăçма,
Вилĕме тĕп тума.
Пурнăç, пурнăç сана,
Чыс-мухтав яланах!
Çӳл Ай-Петри çинчен,
Кăмăлăм туличчен,
Пăхрăм тинĕс çине,
Уçрăм ун çиттине,
Тытрăм кăкăр çумне

Çут хумсен çăлтăрне.
Кĕрхи кун саламне,
Эпир ыр сунните
Ил, Ай-Петри, пиртен,
Çул çӳрен çынсенчен.

1965.

## МИСХОРТА

Толстой ҫӳренӗ ҫулсемпе
Эп иртрӗм хамӑн туссемпе.
Мана, чӑваш юрӑҫине,
Леш вутӑш чӗнчӗ хӑй патне.
Эп пӗлтӗм унӑн шӑпине —
Ӑна мӗнле вӑрланине:
Чура пулма хӗр килӗшмен,
Тарать султан тыткӑнӗнчен...
Эс, Вутӑш, парччӗ аллуна,
Манран хӗрӳ салам сана!
Кунтах-ҫке Горький пирӗнпе,
Хӑйне саван тусӗсемпе,
Чунтан каҫса кайса пуплет,
Килсе курнишӗн хӗпӗртет.
Ак Клара Цеткин куҫ умне
Тухать, хуллен таять пуҫне,
Вӑл туслӑх пӗтӗм тӗнчене
Шанать алла илессине.
Пире кунта кашни кӗтес
Савса кӗтет, ӑҫта ҫитес:
Шаляпин... Чехов... Долорес
Сукмакӗпе утса иртес...
Мисхор, юратрӑм эп сана,
Мана эс патӑн ӑшшуна!

1965.

## ЙĔРЕКЕН ХĂВАСЕМ

Юрлаççĕ симĕс пальмăсем,
Ташлаççĕ капăр каштансем...
Хĕвел шевли, хĕвел кулли,—
Унтан мĕн пур-ши илемли!
Мĕн-ма йĕретĕр, хăвасем?—
Шывланнă сирĕн куçăрсем.
Сахал-и сăхă тăшмансем
Çак çĕр çине пуснăскерсем,
Шăл йĕрнĕ, кулнă вĕсенчен,
Кăшланă халсăр пуличчен.
Калас килет хăвасене.
Сăнран салхуллă туссене,
Шăлса тасатăр куççульне,
Çитет усмашкăн пуççене!—
Эсир ÿсетĕр кăнтăрта,
Хĕвеллĕ, ăшă вырăнта.

1965.

# ТУС-ТĂВАНĂМСЕНЕ

**ÇӲПÇЕМĔР ИКСĔЛМЕСТ**

Телей сунса пулăшнипе
Ĕçри сӳремĕр кивелмест.
Тырри пулсан,
                    савăннипе,
Тулли çӳпçемĕр иксĕлмест.

1967.

## ВАКИЛЬ САБИТОВ КИЛĔНЧЕ

Вакиль Сабитов, лар çумма,
Пĕрле юрлар-ха тутарла.
Çĕкле эс, тусăм, чунăма,
Çĕкле эç, тусăм, кăмăла.

Итле, Вакиль, санпа чухне
Умма тухать Хусан хули;
Вулать пек çĕнĕ сăввине
Маттур поэт Заки Нури.

Утса тухать Тукай, Такташ...
Шараф хĕрӳ сăмах калать.
Кĕрекере мĕн чул юлташ:
Кил лар, Муса! Сана салам!

Минке аппа чупса çӳрет,
Илем кӳрет кĕрекене,
Пире сĕнет сим-пыл, шерпет,
Рехмет Сабитов мăшăрне!

Вакиль Сабитов, чипер юл,
Тавах сан çăкăр-тăварна.
Ан манăр, пырăр килес çул,—
Хыпар çитсессĕн, хăнана.

1969.

## ЛАРАТĂП ЭП СĔТЕЛ ПУÇНЕ

Чуна темле кичем чухне
Ларатăп эп сĕтел пуçне,
Тытап Ухсай сăввисене,
Тарпа, юнпа çырнисене.

Куратăп эпĕ Ухсайра
Тăван чĕлхемĕр хăватне.
Янравлă сăвă-юрăра
Эпир яман чăваш ятне.

Туятăп эпĕ Ухсайра
Хальхи поэзи илемне.
Эпир çак аслă çĕршывра
Талантлă халăх иккенне.

1971.

## УҪĂП ПЕТĔРНЕ

Мухтатăп Уҫăп Петĕрне,
Ҫĕршыв-аннемĕр ывăлне,
Ĕҫчен, маттур драматургне,
Асамлă юрă ăстине,
Сăпай ҫын, халăх тухтăрне,—
Мухтатăп Уҫăп Петĕрне.

Мухтатăп Уҫăп Петĕрне:
Аван унпа пĕрле чухне —
Туятăн пурнăҫ илемне,
Тăванлăх, туслăх пуррине,
Совет ҫыннин ăсне, вăйне,—
Мухтатăп Уҫăп Петĕрне.

Мухтатăп Уҫăп Петĕрне,
Хальхи ҫĕн ĕмĕр ҫыннине.
Ăна усрасчĕ хал ҫитсен
Тата пĕр тепĕр ҫитмĕлччен.
Сăвва кĕртетĕп ун ятне,
Мухтатăп Уҫăп Петĕрне.

1970.

## МУДАРИС* КИЛЁНЧЕ

Мударис, эсĕ çук килĕнте,
Çăмăл мар асилсен чĕрене.
Пĕр шăп çеç пӳлĕмре, тĕпелте,
Куртăм эп çывăх çын портретне.

Шараф тусăм пăхать ман çине
Çиçĕм-çăлтăр хура куçĕпе.
Чунăм сисрĕ — поэт чĕррине,
Вăл вилмен, вăл утать пирĕнпе.

1964.

---

* Мударис — тутарсен паллă поэчĕ.

# ТӐВАТШАР ЙӖРКЕН

Вуникӗ хут ҫапать Мускав сехечӗ,
Ҫӗн ҫулӑмӑр пуҫланчӗ тӗнчипе.
Ҫӳлтен ҫӳле ҫӗклен, ҫӗршыв тивлечӗ,
Совет ҫыннин мухтавлӑ ӗҫӗпе!

Калама именер ҫынсене:
Ман ӗҫрен усси пур-ши, тесе.
Тус-тӑванӑм, ан ман ӗмӗрне —
Тумлам шыв та ҫӗклет тинӗсе.

Кашни ҫакна асра тытар:
Илем вӑл тумтирте ҫеҫ мар.
Этем илемлӗ ӗҫӗпе,
Этем илемлӗ ӑсӗпе.

Ҫурт никӗсне хывсан,
Тӑррине тумалла.

Сăмах патăн пулсан,
Сăмаха тытмалла!

Пиртен пĕри шанми пулсан,
Умра çул çук теме хăйсан,
Ун чух, савни, ан ман вара,—
Утма пуçлан аран-аран.

Пĕр-пĕрне юратса пурăнни —
Пурнăçра чи хакли, чун савни.
Эп каятăп кунтан, эс юлан,
Ан çухат туслăха нихăçан.

Куçук куштан, чĕлхи усал:
Элек сарать, тĕнче касать.
Юлташăм, эсĕ тыт кусар,
Çав çăпана хырса тасат.

Çыртатăн эсĕ пĕр сассăр,
Ялан чее пулма пăхан.
Уру çине ĕне пусмасăр
Юлташлăха ан кĕт санран.

Çавал шывĕ юхать сарăлса,
Çул уçса ыткăнать Атăла.
Савнă тусăм килет васкаса,
Çĕклесе çĕнелен кăмăла.

Сан ҫинчен шухăшла-шухăшла
Ман ăшчикĕм ҫунать кăварла.
Ăс пар, тусăм, мĕскер тумалла,
Ҫулăма мĕн сапса чармалла?

Тухса выртсан ҫĕлен
Каяс ҫулу ҫине,—
Вĕлер, вĕлермесен —
Сăхать ху чĕрӳне.

Ан тив, чир-чĕр каллех кăшлатăр,
Алхастăр вилĕм ман умра.
Сӳнмест, чакмасть чунри хăватăм,
Телей пуртан юратура.

Ҫуркунне, чечексем ҫурăлсан,
Акăш-кайăк, вĕҫсем ҫӳлелле.
Савнă тусăм, мана юратсан,
Хĕвел пек ăшшуна парнеле.

Инҫе ҫулра ывăнсан,
Ярса тыт эс аллăма.
Сынна шансан, юратсан,
Пире ҫăмăл пурăнма.

Савни, пăртак кӳренсен,
Ҫапса ан хуҫ чунăма.

Пӗрре кӑмӑл сивӗнсен,
Питӗ йывӑр ӑшӑтма.

Атте-анне кил-ҫуртӗнче
Вӑй илтӗм,
тухрӑм ҫул ҫине.
Тӑван ҫӗршыв ытамӗнче
Эп — Ҫын,
ӳкместӗп ӗмӗрне!

Шурӑ ҫӳҫ пӗрчисем, —
Уншӑн ма кулянас.
Эпир тунӑ ӗҫсем
Ҫухалмаҫ, пурӑнаҫ.

Чунти илем — тӑван чӗлхем,
Сана мӗнпе танлаштарам:
Эс кӑларан, сапан хӗлхем,
Ҫынна ҫынпа паллаштаран.

Тӑвансем, пӗр-пӗрне юратар,
Пӗр-пӗрне хӗвелле ӑшӑтар.
Ӗмӗрех хисеплер туслӑха,
Яланах пуҫ таяр халӑха.

Юлташӑмсем, тантӑшӑмсем,
Ӗҫре — телей, ӗҫре — илем,
Ҫакна ялан асра тытар,
Ҫӗршыв чысне ҫӳле йӑтар!

Чăн тӳпере вылять хĕвел,
Сиксе анать, чăмать хĕве.
Мĕнле чипер çурхи тĕнче,—
Концерт пуçланнă садсенче.

Усал хыпар çӳрет утпа,—
Сыхлан, тăван, ан яр ятна.
Васка умра выртан çулпа,—
Çӳлтен çӳле çĕкле чысна.

Мĕн начар, мĕн аван,—
Шутласа пăхмалла,
Мĕн ĕçлен, мĕн тăван,—
Ĕмĕре юлмалла.

Эп юратрăм сана,
Эс юратрăн мана.
Тусăм, пар аллуна,
Çăмăл пултăр чуна.

Пуппа куштан — пĕр шуйттан,
Тенĕ ĕлĕк-авалтан.
Вĕсем çине эс ан шан,
Пуçра пăртак ăс пулсан.

Мана, савни, ан ятла,
Начар, тесе ан хурла.

Ырӑ ут та такӑнать,
Ӑслӑ ҫын та йӑнӑшать.

Ыр ҫынпала ҫула тухсан,
Кун иртнине сисместӗн.
Ҫумра юлташ-савни пулсан
Хуйха-суйха пӗлместӗн.

Шӑршласа ҫӳриччен
Ху ӗҫ, тенӗ ӗлӗкрен.
Тус-тӑвана сутиччен
Тасал эс ху ҫӗр ҫинчен.

Хитрисем, хитрисем,
Сар хӗвел ҫутисем.
Пур вӗсен куҫӗнче
Ҫамрӑк, ырӑ тӗнче.

Эс мана хисепле,
Утма ҫул уҫ пӗрле.
Пурнӑҫ пытӑр тесен,
Йӑт, тӑрат эп ӳксен.

Ыйхӑпа аптӑран,
Уншӑн эс хуйхӑран.
Эп ҫунап каҫсерен
Ҫывӑрас килменрен.

Ӗҫне кура хакне тупан,
Кайран кама ятран калан,—
Ӗҫчен Ҫарукшӑн ҫӑварни,
Наян Наҫукшӑн тип эрни.

Утан урам такӑнсан
Ман чӗркуҫҫи ыратать.
Чӗлхем йӑнӑш каласан
Чун-чӗреме вут хыпать.

Сӑмсуна ан ҫӗкле,
Ҫынна сав, ан витле,—
Вӑйли пур вӑйлинчен,
Ӑсли пур ӑслинчен.

Пурте час-час калаҫҫӗ,
Ҫапла хӑш чух ятлаҫҫӗ:
Пурте тырӑ акмаҫҫӗ,
Пурте ҫӑкӑр ҫиеҫҫӗ.

Куштан Иван усал ӗҫ тунине,
Шарт-март пытарчӗ, тунчӗ Кулине.
Ӑнланчӗ халӑх вӑл кам иккенне:
Ҫӑхан сӑхмасть нихҫан ҫӑхан куҫне.

Ҫуралнӑ ялӑн тӗлӗнче
Сӑнатӑп ылтӑн хӗвеле.

Пăла çинче çурхи тĕнче
Ташша ярать чипер хĕрле.

Умра выртать çуна çуль
Атте килне çитиччен.
Чун савниçĕм, чипер юл
Тата тепре куриччен.

Куç умĕнче ан ырла,
Куç хыçĕнче ан хурла.
Икĕ питлĕх, мĕн кала,
Хак çухатнă япала.

Эпир çитес тени инçе,
Ан ывăн, тусăм, çул çинче.
Чĕремĕр патăр ăшшине,
Пире пиллетĕр хĕлхемне.

Чун ăшшине упрас тесен
Юрат çĕре, ан тар çĕртен.
Пире çуратнă Çĕр-анне,
Пире вăл панă сĕткенне.

Урам енне утса килсемччĕ,
Пăхам-и эпĕ сан çине.
Чӳречĕр каррине сирсемччĕ,
Чарсамччĕ ăшăм çуннине.

Чӗлхем хӑвачӗ пур чухне
Мӗн-ма каяс ман кивҫене.
Тавах ҫуратнӑ аннене:
Пиллерӗ халӑх чӗлхине.

Туртатӑп эпӗ лашалла,
Чакмастӑп утӑм каялла.
Кая юлсан — каю шӑтать,
Малта пулсан — ялйыш савать.

Савнӑ тусӑм, мана юратсан,
Ан вылят шухӑшна, кӑмӑлна.
Эс ан ман: телее ҫухатсан,
Тепӗр хут тупаймастӑн ӑна.

Мӗн ҫитет пӗр-пӗрне шаннине,
Мӗн ҫитет пӗр-пӗрне савнине.
Кӗвӗҫӳ хавшатать чӗрене,
Кӗскетет вӑл этем ӗмӗрне.

Савни кӗтет, савни ҫунать,
Вӗҫтер, лашам, юрла, ҫунам.
Сивве чарма, ҫиле чарма,
Йӳле ярам кӑкӑрӑма!

Пурри пӗтет, ҫукки ҫитет,—
Ан манӑр — кирлӗ перекет.
Ан чактӑр пурлӑх пӳлмере.
Тӗп пултӑр ҫуклӑх тӗнчере!

Пурнӑҫ халӑх аллинче,
Пурнӑҫ халӑх ӑсӗнче.
Халӑхпала тан ӗҫле.
Халӑхпала ут пӗрле.

Мухтатӑп вырӑс ҫӗршывне,
Мухтатӑп вырӑс халӑхне.
Вӗсем кӑтартрӗҫ тӗнчене
Ҫынсен хӑватлӑ пӗрлӗхне.



# ÇĔНĔ ЮРРĂМСЕМ

## ЮРАТУ ЮРРИ

Атăл, Атăл, хумлă Атăл,
Эс çĕклетĕн чунăма.
Савнă тусăм, эп пуçлатăп
Юратушăн юррăма.

Пытармастăп, савнă тусăм,
Эп телейлĕ — эс пуртан.
Юрла, чунăм, хура куçăм,
Юратушăн манпалан.

Юратушăн эп çунатăп,
Юратушăн эс çунан.
Юратушăн, аслă Атăл,
Эс те юррăн туйăнан.

Эс саватăн, эп саватăп
Чун-чĕремĕр хушнипе.
Юратушăн, чипер Атăл,
Юрла эс те пирĕнпе.

Атăл, Атăл, хумлă Атăл,
Эс юхатăн сарăлса.
Чунăм, тусăм, эп юрлатăп
Юратушăн савăнса.

1970.

## ЭП КĔТЕТĔП САНА...

Эп кĕтетĕп сана,
Эс кĕтен пуль мана
Чĕресем тĕл пулсан,
Хĕпĕртетпĕр чунтан.

Эп шыратăп сана,
Эс шыран пуль мана.
Пĕрле çуммăн ларсан,
Калаçатпăр чунтан.

Эп шанатăп сана,
Эс шанан пуль мана.
Пĕр-пĕрне шаннăран
Савăнатпăр чунтан.

1971.

## ПИРЕ ТӐВАН КĔТСЕ ТӐРАТЬ

Ыр ут юртать, пуҫне ухать,
Ҫулне кĕске тума васкать.
Пире тӑван кĕтсе тӑрать,
Пӳрт алӑкне уҫса хурать.

Пире тӑван кĕтсе тӑрать,
Сакки ҫинче сӑра ларать.
Сĕтел ҫинче кукар яшки,
Улма-ҫырли чашки-чашки.

Пире тӑван кĕтсе тӑрать,
Ҫитейместрен чунтан хӑрать.
Ыр ут юртать, пуҫне ухать,
Хӑта килне ҫитме васкать.

1971.

## ТӐВАНСЕМӖР, ТАВ СИРЕ

Тӑвансемӗр, пӗрле чухне
Ай, юрлар-и юррине.
Эсир пире хӑна турӑр,
Каяс пулать, чипер юлӑр.

Эх, ытарма та ҫук сире,
Чунтан саватӑр пире.

Тӑвансемӗр, тавах сире,—
Туслӑх пытӑр ӗмӗре.
Кӗрекӗрсем тулли пулччӑр,
Ватти-вӗтти ыр курччӑр.

Эх, ытарма та ҫук сире,
Чунтан саватӑр пире.

Тӑвансемӗр, ӗҫ пуҫтарсан,
Кӗрхи кунсем пуҫлансан,
Пире хисеп, чыс тусамӑр,
Пырса курма ан мансамӑр.

Эх, ытарма та ҫук сире,
Чунтан саватӑр пире.

1961.

## ЭПИР — МАТТУР ÇАМРĂКСЕМ

Çĕршыв ÿсет, хăват илет
Ильич ялавĕ айĕнче.
Ăна савса юрлас килет
Тĕнче, пур халăх умĕнче.

Комсомолецсем,
Маттур çамрăксем,
Эпир — çĕн ĕмĕр сыннисем,
Утатпăр сутă ĕмĕтпе,
Аттемĕр Ленин çулĕпе.

Пирте тапать мĕльюн чĕре
Нихçан сÿнми хĕрÿллĕхпе.
Ялан эпир малти ретре,
Пĕрле юратнă партипе.

Комсомолецсем,
Маттур çамрăксем,
Эпир — çĕн ĕмĕр сыннисем,
Утатпăр сутă ĕмĕтпе,
Аттемĕр Ленин çулĕпе.

Пурте чунтан савса упрар
Тăванлăх, туслăх ялавне.
Эпир ĕçчен, эпир хастар,
Ята ямастпăр ĕмĕрне.

Комсомолецсем,
Маттур çамрăксем,
Эпир — çĕн ĕмĕр сыннисем,
Утатпăр сутă ĕмĕтпе,
Аттемĕр Ленин çулĕпе.

1968.

## АТЬĂР ЮРĂ УЯВНЕ

Пĕрле атьăр, тантăшсем,
Асран кайми тусăмсем,
Сар хĕвеллĕ ĕшнене,
Ĕçпе юрă уявне.
Ай-яй-яй,
Ĕçпе юрă уявне.

Шăрантарăр, тантăшсем,
Асран кайми тусăмсем,
Мирлĕ халăх юррине,
Савса çĕршыв-аннене.
Ай-яй-яй,
Савса çĕршыв-аннене.

Чун-чĕрери тантăшсем,
Асран кайми тусăмсем,
Ан сӳнтерĕр ĕмĕрне
Юратăвăн хĕлхемне.
Ай-яй-яй,
Юратăвăн хĕлхемне.

1966.

## ПИРĔН ÇЕÇПĔЛ

Çĕкленчĕ Çеçпĕл ирĕкре,
Сас пачĕ, сарчĕ çунатне.
Çĕн кун çынни, кăвар чĕре,
Пире пиллерĕ пурнăçне.

Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Ыра Çеçпĕл,
Яту юлтăр ĕмĕре.
Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Савнă Çеçпĕл,
Пурăн пирĕн чĕрере.

Тăван чĕлхемĕр хăватне
Ĕненнĕ Çеçпĕл чунĕпе,
Ун илемне, пуласлăхне
Пуç тайнă халăх ячĕпе.

Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Ыра Çеçпĕл,
Яту юлтăр ĕмĕре.
Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Савнă Çеçпĕл,
Пурăн пирĕн чĕрере.

Çĕршыв-аннемĕр ялавне
Вăл тытнă çирĕп, ӳкермен.
Мухтатпăр Çеçпĕл ыр ятне,
Юрлатпăр юрă ун çинчен.

Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Ыра Çеçпĕл,
Яту юлтăр ĕмĕре.
Çеçпĕл, Çеçпĕл,
Савнă Çеçпĕл,
Пурăн пирĕн чĕрере.

1969.

## САЛАМ СИРЕ, КОСМОНОВТСЕМ!

Салам сире, космонавтсем,
Асран кайми тусăмăрсем!
Эсир Тăван çĕршыв чысне
Çĕклерĕр çӳллĕ тӳпене.
Космонавтсем,
Космонавтсем,
Сире савать, мухтать тĕнче.
Эсир — патвар,
Эсир — хастар
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче.

Этем нихçан çитмен çĕре
Çул хыврăр, улăп-паттăрсем.
Илемлĕ, чаплă ĕмĕре
Пиллерĕр çĕнĕ çунатсем.

Телейлĕ çул сунать сире
Тăван çĕршыв — тăван анне.
Çитме чĕнет Ильич пире
Çӳле, çут çăлтăрсем патне!
Космонавтсем,
Космонавтсем,
Сире савать, мухтать тĕнче.
Эсир — патвар,
Эсир — хастар
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче.

1962.

## ЯКОВЛЕВА СУМА СУСА

Иван Якăльч ятне манмастпăр.
Усратпăр халăх асĕнче.
Ăна сума суса юрлатпăр
Илемлĕ Атăл хĕрринче.

Çын вăй-халне вăл çирĕп шаннă,
Пире вăл чĕннĕ — çутталла.
Ăна Ульянов асăрханă,
Савса ал панă тăванла.

Вĕсем пĕрле тăрса çул хывнă
Ыр ĕмĕтпе — малашлăха.
Пĕрле тыр акнă, тырă вырнă,
Пĕрле çĕкленĕ туслăха.

Тавах сана, Раççей-аннемĕр,
Тавах, манмарăн эс пире.
Пĕрле пулнишĕн чун-чĕремĕр
Сана саватпăр ĕмĕрех!

1968.

## КУНТА ÇУРАЛНĂ ЛЕНИН

Сарса хăй мăшăр çунатне
Тухать Ульяновск куç умне.
Кунта, пур халăх телейне,
Çуралнă Ленин çуркунне.

Ульяновск, эсĕ авалтан
Пире чи çывăх тус-тăван.

Илемлĕ Атăл хĕрринче,
Раççей-аннемĕр варринче
Ӳсетĕн эсĕ, çĕнелен,
Тăванлăхра вăй-хал илен.

Ульяновск, эсĕ авалтан
Пире чи çывăх тус-тăван.

Апрель хĕвелĕ тӳпере,—
Çути сӳнмест ун ĕмĕрне,
Ульяновск пирĕн чĕрере
Упрать Ильичăн ыр ятне.

Ульяновск, эсĕ авалтан
Пире чи çывăх тус-тăван.

1969.

## ЭПИР ПУРТЕ ĔÇЧЕНСЕМ

Ирхи шуçăм çутипе,
Эпир пĕрле, эртельпе,
Кар! тухатпăр ĕçлеме,
Чун хĕлхемне çĕклеме.

Анлă Атăл хĕрринче,
Хальхи Чăваш çĕрĕнче
Чи хĕрӳллĕ ĕç верет,
Тулăх пурнăç вăй илет.

Эпир пурте ĕçченрен
Паллă пулнă ĕмĕртен.
Аслă, туслă çемьере
Халь тĕпелте, хисепре.

Чун-чĕремĕр хĕлхемне
Сӳнтерес мар ĕмĕрне.
Юрлар савнăç юррине,
Мухтар çĕршыв-аннене!

1966.

## ТĂВАН ШУПАШКАР

Ман маттур аттене,
Хурт-хăмăр ăстине,
Ĕç çинчен калаçма,
Хăйпеле паллашма
Чĕнчĕç тĕп хулана
Пĕр ик-виçĕ куна.
Кайрăм эп аттепе
Шупашкар хулине.
Калас теп йĕркипе
Хам мĕн-мĕн курнине:
Троллейбус, автобус
Эх, вĕçеç вокзалтан.
Тӳлен те пилĕк пус
Савăнса çеç пыран.
Инçе мар çакăнтан
Çӳллĕ палăк куран.
Ку вăл паттăр Чапай
Çӳрен ут лашапа,
Аллине хĕç тытса,
Эй, урра! кăшкăрса,
Çынсене çул парса,
Çăлтăр пек çуталса,
Вĕçтерет улăпла,
Вĕçтерет малалла...
Шупашкар варринче
Ильича эс куран.
Ӳсет ун умĕнче
Тĕп хуламăр ялан.
Курать Ленин пире,
Чĕнет Ленин пире
Тăрăшса вĕренме,
Тăрăшса ĕçлеме.
Эпир вăл чĕннине,
Ыр сунса хушнине
Кăлармастпăр асран
Ĕмĕрне, нихăçан.

Пултăм эп аттепе
Советсен çуртĕнче.
Эх, унта пирĕнпе
Калаçас ĕç çинчен.
Тыра-пулă, садсем,
Ылтăн хурт-хăмăрсем,
Ялйышсем, ачăрсем
Мĕнле? теççĕ хăйсем.
Кайран пĕлтĕм: вĕсем
Çав çуртри ĕçченсем.
Советсен çуртĕнчен
Инçе мар, çул çинче
Ларать çӳллĕ чул çурт,
Ун пекки те пур, çук,
Хăй шап-шур, хăй çап-çут.
Ку вара — институт.
Тухнă, теç вĕренсе,
Ăс пухса, ăс илсе,
Çакă капăр çуртран,
Çакă институтран
Пирĕн кӳршĕ Ястук,
Çĕрпӳ хĕрĕ Настук.
Эп пырап урампа,
Асфальт сарнă çулпа,
Чул çуртсем айккипе,
Йывăçсем хушшипе.
Инçетрен курăнать:
Ту çинче — комбинат,
Пур йышпа, эртелпе,
Чи хастар çынсемпе,
Тунă теççĕ ăна
Ман пичче Йăкăнат.
Пултăм эпĕ унта,
Эх, мĕн çук, тупата!
Кĕр-кĕрлес станоксем,
Пир тĕртеççĕ хĕрсем.
Кашниех пит сатур,
Калама çук маттур.

Савăнни ахаль мар —
Çĕнелет Шупашкар!
Ăçта пыр — заводсем,
Хастар-çке сыннисем.
Акă тикĕс çĕрте,
Халăх йышлă тĕлте,
Пĕр завод çĕкленет,
Унтан сын тĕлĕнет.
Чипер ун çурчĕсем.
Кунĕн-çĕрĕн вĕсем
Кĕрлеç ĕç шавĕпе,
Моторсен сассипе.
Çак завод сыннисем
Ĕлĕкрен ĕçченсем.
Кăлараççĕ хăйсем
Электро хатĕрсем.
Мĕн калас, тантăшсем,
Çак паха хатĕрсем
Каяç пит инçене,
Вьетнама, Индине...
Çак завод ĕçĕпе,
Унти пур сынсемпе
Шупашкар савăнать,
Шупашкар мухтанать.
Мĕн калам-ши сире,—
Хĕпĕртет чун-чĕре.
Шутласан тĕлĕнен
Халăх вăй-халĕнчен.
Тĕлĕнмесĕр ара —
Мĕн-мĕн çук хулара!
Пур парксем, пур садсем,
Куç тулли чечексем,
Телевизор, кино,
Стадион, радио...
Шăкăрт-шăкăрт утса,
Аттепе калаçса
Антăм Атăл хĕрне,
Тăтăм карлăк çумне.

Эй, йӑлт урӑх тӗнче
Манӑн куҫ умӗнче!
Аслӑ Атӑлпала
Ҫӳлелле, тӑвалла
Пӑрахут хӑпарать,
Хум ҫапса хӑварать.
Кунта йӑлт ҫӗнӗлле:
Куславкка еннелле
Шур «Ракета» вӗҫет,
Сумлӑ сулӑ иртет.
Шупашкар ҫыннисем,
Ваттисем, вӗттисем
Ӑшӑ, шӑрӑх кунра
Савӑнаҫҫӗ шывра.
Мӑшӑр куҫӑм тулли
Чӑвашсен тӗп хули.
Хумлӑ Атӑл хӗрри,
Сар хӗвелӗн тӗрри
Ҫӗклес ман чунӑма,
Лӑпкаҫ ман куҫӑма.
Ҫакӑнта, сӑрт ҫинче,
Сад пахчи варринче,
Кӗҫтенттин пирӗнпе,
Ик хура куҫӗпе
Пӑхать мал еннелле,
Хӗвелтухӑҫнелле.
Ун гранит палӑкне —
Ҫӗн хула илемне —
Сӑвӑҫа чыс! тесе,
Эп пуҫ тайрӑм, туссем.
Эх, сана Шупашкар,
Мӗнле ман мухтас мар!
Кӗтӗм эп каҫхине
Ачасен керменне.
Ку илемлӗ ҫуртра,
Шӑпах ҫак вӑхӑтра,
Пултӑм эп кружокра,
Пултӑм выставкӑра.

Ăстасем пур вара
Хулари халăхра!
Йĕркерен модельсем.
Вĕçекен спутниксем,
Ишекен карапсем —
Ачасен парнисем.
Сахал мар вĕсенчен,
Çак çуртри туссенчен,
Ăс илмешкĕн пулать,
Вĕренмешкĕн пулать.
Чи палли пур тата:
Кĕрсе куртăм кунта
Эп Ильич музейне.
Унта мĕн курнине,
Унта мĕн илтнине
Манас çук ĕмĕрне.
Ачасемшĕн чунтан,
Пур таса кăмăлтан
Мĕн кусне хупиччен
Ленин çуннă иккен.
Тайма пуçăм ăна —
Хамăр аслă çынна!
Пултăм кив музейре,
Ах, ыратрĕ чĕре:
Ĕлĕкхи вăхăтра
Юхнă юн çĕршывра.
Ĕççынни авалтан
Телейне тупайман.
Уншăн ырлăх пулман,
Хĕвел те йăл кулман.
Çут Октябрь кăна
Пачĕ çĕн самана.
Этем сарчĕ çунат,
Тупрĕ чăн вăй-хăват.
Çаксене йĕркипе,
Йăлт тĕпĕ-йĕрĕпе
Музейре эс куран,

Пурнăçа ăнланан,
Эх, хальхи Шупашкар,
Эс текех мĕскĕн мар!
Тĕп хула варринчи
Йывăçсен хушшинчи
Çĕн театр çуртне,
Ун мăнаçлă сăнне
Эпĕ илтĕм пăхса,
Кайрĕ чун уçăлса.
Унта пирĕн çынсем,
Хай маттур артистсем,
Лауреат пулнисем,
Кăтартаççĕ: «Ялта»,
«Шыв арманĕ», «Айтар»...
Эй, ĕçчен артистсем,
Пирĕн тус-пĕлĕшсем,
Аслă Ленин сăнарĕ
Яланах хăват парĕ
Халăха та, сире те —
Чунăмпа эп сисетĕп.
Тав тăватпăр сире,—
Хисеплетĕр пире!
Чăвашсем авалтан
Пуян теç юрăран,
Куçпуçа илĕртен
Пин тĕрлĕ тĕрĕрен.
Эп ăнлантăм çакна
Кĕрсенех хулана.
Чун-чĕре ыйтнипе,
Ырă çут ĕмĕтпе
Кĕтĕм пĕр каçхине
Филармони çуртне.
Унта мĕн курнине,
Унта мĕн илтнине
Тăрăшсан, пит кĕскен
Калама пулать, тен.
Çакă селĕм çуртра

Лартăм эп концертра.
Эх, ал çупрăм вара,
Çиçрĕ савнăç чунра.
Ак ăçта вырăсла,
Чăвашла, тутарла...
Сăвă-юрă юхать,
Таврана ян каять.
Юрлакан хĕрĕсем,
Ташлакан каччисем,
Мĕн калас, халиччен,
Каймаç куç умĕнчен.
Эх, сана Шупашкар,
Ман мĕнле мухтас мар!
Пур кунта пĕр кĕпер,
Хăй вĕр-çĕнĕ, чипер.
Кĕпер урлă каçсан,
Тўрех эсĕ куран:
Пичет çурчĕ ларать,
Кĕнеке кăларать.
Чăвашла хаçатсем,
Чăвашла журналсем
Йăлт тухаççĕ кунтан,
Çакă пысăк çуртран.
Калас теп, юлташсем,
Тус-тăван тантăшсем,
Пичетленнĕ кунта
Кăçал, çĕнĕ çулта,
Çеçпĕлпе Хусанкай,
Ухсайпа Ваçанкка...
Поэтсен сăввисем,
Чĕререн çырнисем.
Аслă Атăл çинче,
Шупашкар çумĕнче
Вăйлă ГЭС пулмалла,
Çунатне сармалла.
Тантăшсем, ун чухне,
Çĕр-анне илемне

Çĕн хула тинĕсне,
Унăн шавлă хумне
Юратса, пуç тайса,
Чĕререн мухтаса
Иртĕç пирĕн туссем,
Пур совет çыннисем...
Çуллахи кунсенче,
Шупашкар хулинче
Хам мĕн-мĕн курнине,
Хам мĕн-мĕн илтнине
Каласа пĕтерме
Йывăр хал çитерме.
Шупашкарăм, сана,
Хамăр тĕп хулана,
Хисеплетпĕр чунтан
Мĕн ĕлĕк-авалтан.
Эс татах ÿс, çĕнел,
Ĕмĕрне ан кивел.
Ырă кăмăлпала,
Çывăх тус-тăванла,
Çĕршыври халăхсем
Пур совет çыннисем
Саламлаççĕ сана,
Çĕнелен хулана.
Эс упра ху чысна,
Эс упра ху ятна.
Эх, тăван Шупашкар,
Ма сана мухтас мар!

1965—1971.

## ТУПМАЛЛИ

**Пурнăç ăшши**


Раççей . . . . . . . 3
Хĕвел . . . . . . . 4
Кунта, чăваш çĕршывĕнче . . . 5
Чĕре . . . . . . . 6
Шупашкарăм, тăван Шупашкар . . 7
Мана хатĕр пулăшма . . . . 8
Çĕнĕ çулăм, çĕнĕ çул . . . . 9
Вашингтон, эс итле! . . . . 10
«Хĕрарăм тухнă урама» . . . 11
Çул çинче . . . . . . 12
Туйнă пурнăç ăшшине . . . . 13
Сан çумăнта тусусем . . . . 14
Атте сĕтелĕ хушшинче . . . . 15
Ялта тавар сутакан . . . . 16
Сăмах хăвачĕ . . . . . . 17
Чăваш университетне . . . . 18
Етĕрнере . . . . . . 19
Аван-и . . . . . . . 21
Хăнара . . . . . . . 22
Ман шăпа . . . . . . 23
Чăваш вăрманĕ . . . . . 24
Хăмла . . . . . . . 25

Ялан курасчĕ вĕсене . . . . . 26
Чĕрем тапма пăрахсан . . . . 27
Мир кирлĕ . . . . . . . 28
Каçар, анне . . . . . . . 29
Тăван Атăл . . . . . . . 30
Экспромт . . . . . . . 31
Эпир, çĕн ĕмĕр каччисем . . . 32
Сăмах кирлех-ши . . . . . 33
Патăръелсем . . . . . . 34
Куккук . . . . . . . . 35
Ан татăл, пурнăç . . . . . 36
Ывăлăма . . . . . . . 37
Çĕнĕ пӳрт парни . . . . . 39

## Пурçăн тутăр

Юратусăр мĕнле пурăнан . . . 41
Çĕн уйăх йăтрĕ çурлине . . . 42
Марине . . . . . . . . 43
Юратушăн юрă тупрăм . . . . 44
Шур кăвакал вĕçтертĕм . . . 45
Пурçăн тутăр . . . . . . 46
Юрату çăлкуçĕ . . . . . 47
Сатин кĕпе . . . . . . 48
Çĕпĕрти тусăма . . . . . 49
Савни валли . . . . . . 50

## Кăнтăр хĕвелĕ

Тинĕс шавлать . . . . . . 51
Салам сана, Гурзуф . . . . 52
Ай-Петри . . . . . . . 54
Мисхорта . . . . . . . 56
Йĕрекен хăвасем . . . . . 57

## Тус-тăванăмсене

Çӳпçемĕр иксĕлмест . . . . 58
Вакиль Сабитов килĕнче . . . 59
Ларатăп эп сĕтел пуçне . . . 60

Уҫăп Петĕрне . . . . . . 61
Мударис килĕнче . . . . . 62

**Тăватшар йĕркен . . . . 63**

**Ҫĕнĕ юррăмсем**

Юрату юрри . . . . . . 73
Эп кĕтетĕп сана . . . . . 74
Пире тăван кĕтсе тăрать . . . 75
Тăвансемĕр, тав сире . . . . 76
Эпир—маттур ҫамрăксем . . . 77
Атьăр юрă уявне . . . . . 78
Пирĕн Ҫеҫпĕл . . . . . . . 79
Салам сире, космонавтсем . . 80
Яковлева сума суса . . . . 81
Кунта ҫуралнă Ленин . . . . 82
Эпир пурте ĕҫченсем . . . . 83
Тăван Шупашкар . . . . . 84

**Василий Иванович Давыдов-Анатри**

**БЛАГОДАРЮ ВАС, РОДНЫЕ**

**Стихи**

На чувашском языке

Редактор **Г. А. Ефимов**
Художник **Х. М. Юрьев**
Художественный редактор
**С. А. Владимиров**
Технический редактор
**В. М. Михайлов**
Корректор **Л. А. Иванова**

НТ 16361. Сдано в набор 28/II-1972 г. Подписано к печати 16/IV-1973 г. Изд. № 63/73 г. Формат 60×90/32. Бумага типографская № 2. Физ. печ. л. 3,00. Учетно-изд. л. 2,68. Заказ 1358. Тираж 2000 экз. Цена 27 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли
Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары, Володарского, 5.

Цена 27 коп.

